*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

52 (2565) №
Хакĕ ирĕклĕ

2015
июль/утă
31

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ЭРНЕКУН

**РЕСПУБЛИКА УЙ-ХИРĔНЧЕ**

**Красноармейски районĕнче АПК комплексĕн, мониторинг, апат-çимĕç рынокĕн лару-тăрăвне йĕркелекен ыйтусемпе ĕçлекен правительство комиссийĕн ларăвĕ иртрĕ. Пухăннисем «Красное Сормово», «Таябинка» хуçалăхсенче вырма ĕçĕсемпе паллашрĕç, районти культура çуртĕнче АПК отраслĕнчи кăçалхи ултă уйăхри ĕç-хĕле пĕтĕмлетрĕç, тырă хакне палăртрĕç, ытти ыйтусене сӳтсе яврĕç.**

# Вырма, тырă хакĕ тата ытти ыйту

### Уйри мар, кĕлетри – тухăç

Сап-сарă тинĕсре «хир карапĕсем» пĕрин хыççăн тепри мăнаçлăн шăваççĕ. Кĕрхи тулă ĕççыннине тав тунăн тулли пучахне уснă. Анлă уй-хирте техника кĕрлени кăна илтĕнет.

– «Московский-39» кĕрхи тулă ыттисенчен маларах пиçсе çитнипе вырмана унран пуçлатпăр. Хальлĕхе гектар пуçне 40 центнертан кая мар тухать, – кăмăллăн пĕлтерет «Таябинка» агрофирма ертӳçи Александр Афанасьев. – Кăçал пирĕн пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене 2800 гектар ытларах вырса кĕртмелле. Унсăр пуçне куккурус – 514, çĕрулми 200 гектар йышăнать. Çавăнпа вырмана çийĕнчех тухрăмăр. Кăçал ултă комбайн уйхире кăлартăмăр. Çанталăк лайăх тăрсан кунне 550-560 тонна вырса çапаççĕ.

«Сарă ылтăна» тырă тасатса типĕтекен комплекса турттараççĕ. Ăна хуçалăх иртнĕ çул хăй укçи-тенкипе тунă. 25 млн тенке кайса ларнă вăл. Хăватлă комплекс сехетре 50 тонна тырă типĕтет. Уй-хиртен кĕнине йăлтах тасатса типĕтме ĕлкĕрет. Куккурус та вăрлăхлăх акнă. Çумăр, ăшă çанталăк тăнипе вăл парка та çӳллĕ çитĕннĕ. «Тухăça упрама çитес çул тепĕр хранилище тума тивет, вырнаçмасть», – терĕ ертӳçĕ юсаса çĕнетнĕ складсене кăтартнă май.

«Красное Сормово» хуçалăхра вара тырра типĕтнинчен ытларах вырлăхчĕрлĕх валли консервлаççĕ. «МАХ 110» техникăна пĕлтĕр 3 млн тенкĕлле туяннă.

– Кăçал çанталăк йĕперех тăрать. Вăл вара вырнă тырра типĕтмесĕрех лапчăтса полимер михĕсене тултарать. Çапла майпа консервланă тырă хĕлĕпех пăсălмасть. Выльăхшăн тутлăхлă паха апат, – паллаштарать хуçалăх ертӳçи Святослав Иванов.

Кун пек техника республикăра иккĕ кăна, тепри – Шупашкар районĕнчи «Чурачикский» хуçалăхра. «Красное Сормово» предприяти те темиçе эрне каяллах вырмана тухнă. Юсаса çĕнетнĕ складра тырă купи ӳссех пырать. «Нӳрĕклĕхĕ кăçал пысăкрах, 30 процент таранах», – теççĕ



Сăнӳкерчĕкĕ www.cap.ru сайтран илнĕ

ĕçченсем. – Юрать, тырă типĕтмелли оборудование газ çине куçарнă. Унсăрăн дизтопливо туянсах укçа пĕтетчĕ».

Йĕтем çинче шкул ачисем те тăрăшаççĕ. «Эпир вĕсене хĕрӳ тапхăрта яланах ĕçе явăçтарма тăрăшатпăр. Ашшĕамăшĕ те хирĕç мар. Кайран хăшĕ-пĕри хуçалăхра юлĕ-и, тен?» – пĕлтерчĕ Святослав Петрович.

### Пĕрин ӳсет, теприн чакать

Чăвашстат кăтартăвĕпе кăçалхи çур çулта республикăра ялхуçалăх производствин индексĕ 102,5 процент пулнă. Кăçал Чăваш Енри АПК отраслне патшалăх пулăшăвĕ 2,69 млрд тенкĕлĕх памалла. Çав шутра федераци бюджетĕнчен – 1,89 млрд, республика хысниччен 807,2 млн тенкĕ. Укçана вăхăтра уйăрнине, унпа тухăçлă усă курнине палăртмалла.

Чăваш Республикин кризиса хирĕç йышăннă планĕпе килĕшӳллĕн РФ Правительстви фермер ĕçне пуçăнакансене – 15, 2 млн, çемье фермине аталантарма 19,2 млн тенкĕ хушма укçа уйăрнă. Отрасле инвестици кредитне явăçтарасси те ӳссех пырать. Анчах федераци бюджетĕнчен уйăракан субсиди кредита финанслама çителĕксĕртерех.

Чăвашстат кăтартăвĕпе кăçалхи июль уйăхĕ тĕлне республикăри мĕнпур категорири хуçалăхсенче аш-какай – 49,6 пин, сĕт 226 пин тонна туса илнĕ. Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Тăвай, Етĕрне районĕсенче аш-какай илесси уйрăмах сахалланнă. Çĕмĕрле тăрăхĕнчи пысăк хуçалăхсен çур çулхи кăтартăвĕ 67,2 тоннăпа çеç танлашнă. Улатăр (63 тонна), Сĕнтĕрвăрри (46,7), Куславкка (27,8) районĕсен кăтартăвĕ вара вăтам фермер хуçалăхĕнничен те пĕчĕкрех. Сĕт илессипе Çĕмĕрле, Етĕрне, Пăрачкав, Йĕпреç тăрăхĕсенче çителĕксĕр ĕçленĕ.

Июль тĕлне республикăра майракаллă шултра выльăх 203,3 пин пуç шутланнă, çав шутра сăвăнаканни – 92,7 пин, сысна – 176 пин. Çак тапхăрта чăх-чĕп, сурăх-качака йышĕ палăрмаллах ӳснĕ.

Ултă уйăх кăтартăвĕпе аш-какай туса илессипе Федерацин Атăлçи округĕнче Чăваш Ен виççĕмĕш вырăнта, сĕтпе вара – улттăмĕшĕ. Çакă выльăх-чĕрлĕх объекчĕсене çĕнетнипе те çыхăннă. Кăçал ĕне фермисене юсаса çĕнетме, тума 15 инвестици проекчĕ хута каймалла.

2-мĕш стр. ➔

**КĔСКЕН**

### Пĕлӳ кунĕ тĕлне – парне

Чăваш Ен Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев ячĕпе РФ Президенчĕ çумĕнчи ачасен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйран, Павел Астаховран, çыру килнĕ.

Унта «Çĕнĕ Раççее – пĕлӳ кунĕ» ыркăмăллăх акцие республика хастар хутшăннине палăртнă, Донецкпа Луганск халăх республикисенчи шкул ачисем валли çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне хатĕр-хĕтĕрпе пулăшнишĕн тав тунă. Акци вăхăтĕнче пухнă гуманитари пулăшăвне (çĕршывĕпе 250 тонна ытла пуçтарнă) Мускавран Луганск тата Донецк тăрăхĕсене июлĕн 30-мĕшĕнче илсе çитерессине пĕлтернĕ.

Ача-пăча омбудсменĕ Павел Астахов каланă тăрăх – асăннă тăрăхсенче пурăнакан, вăрçă-харçă нушине тӳснĕ çемьесенчи çула çитмен ачасене шкул хатĕрĕпе, канцеляри таварĕпе, парнесемпе тивĕçтерĕç. Раççейĕпе пухнă пулăшу 23 пин ачана çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме çитĕ.

Сăвапллă ĕçе министерствăсемпе ведомствăсем, предприяти-учреждени, Чăваш Енре пурăнакансем хутшăннă. Пĕтĕмĕшле 800 пин тенкĕлĕх шкул хатĕрĕ, канцеляри таварĕ, спорт тумĕ пуçтарнă. Июлĕн 16-мĕшĕнче 320 чĕркеме (3 тонна) асăннă тăрăхсене çитермешкĕн Мускав хулине ярса панă.

Республикăра хальхи вăхăтра Донбасс валли гуманитари пулăшăвĕ пухакан 26 пункт ĕçлет. Вĕсем апат-çимĕç, гигиена тата вĕренӳ хатĕрĕсем йышăнаççĕ. Çак пунктсем ирхине 10 сехетре ĕçлеме тытăнаççĕ. Акцие хутшăнакансене волонтерсем «Эпĕ Донбаса пулăшрăм» кăкăр çине çакмалли паллă параççĕ.

### 82 регион хушшинче 6-мĕш

РФ Спорт министерстви Раççей Федерацийĕн субъекчĕсемпе пĕрле «Физкультурăпа спорта аталантарасси» патшалăх программине пурнăçа кĕртме тăрăшать. 2014 çулта çак программăна еплерех пурнăçланине пĕтĕмлетнĕ май Чăваш Ен 82 регион хушшинче 6-мĕш вырăн йышăннине палăртнă.

«Физкультурăпа спорта аталантарасси» программа граждансене физкультурăпа туслашма условисем туса парать. Çавăн пекех Раççей спортне тĕнче шайне çĕклеме пулăшать. 2014 çулхи пĕтĕмлетӳ тăрăх – Чăваш Енре спортпа туслашнисен шучĕ ӳснине палăртмалла.

### Тавралăха илем кĕртме

Кăçалхи августăн 29-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри «Симĕс Раççей» общество юхăмĕн пуçарăвĕпе экологи субботникĕ иртет.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе кăçал 70 çул çитнине халалласа «Çĕнтерӳ вăрманĕ» проект йĕркеленĕччĕ. Çавна май апрель-май уйăхĕсенче вăрçăра вилнисен ячĕпе йывăççем, сирень тĕммисем лартрăмăр. «Симĕс Раççей» экологи субботникĕ çак акцин юлашки тапхăрĕ шутланать. Вăл «Çĕнтерӳ вăрманĕ. Эпир астăватпăр. Эпир мухтанатпăр!» девизпа иртет. Субботник вăхăтĕнче çуркунне лартнă хунавсене çумкурăкран тасатĕç, шăварĕç, кăпкалатĕç.

«Симĕс Раççей» субботнике ентешсем те хастар хутшăнасса шанатпăр.

# Кĕлет тулать

Июлĕн 29-мĕшĕ тĕлне республикăри мĕнпур районта вырмана тухнă. Ку вăхăт тĕлне 26 971 гектар пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене çулнă (9,3 процент), çав шутра 25 455 гектар çинчи лаптăка вырса çапнă. Улатăр, Патăрьел, Вăрнар, Комсомольски, Красноармейски, Пăрачкав, Çĕрпӳ, Шăмăршă, Елчĕк тăрăхĕсенче лаптăксем самай пушаннă. Пӳлмене 53 314 тонна «сарă ылтăн» кĕнĕ, гектарти вăтам тухăç – 20,9 центнер. Элĕк (25,1 центнер), Вăрнар (25,6), Шупашкар (26,5), Муркаш (25) районĕсенче кăтарту пысăкрах. Талăкра 8 пин тонна вырса çапаççĕ. Уй-хирте 386 комбайн ĕçлет.

Палăртнă вăхăт тĕлне ир пулакан çĕрулмине 18,9 гектар çинчен пуçтарса кĕртнĕ, пахчаçимĕçе – 14.

Кĕрхисем акма 54 629 гектар çĕр хатĕрленĕ. Çĕртме 1 пин гектар ытла тунă. Пĕр çул ӳсекен курăксене 20 пин гектар ытларах (70,4 процент) çулнă. Утă – 118,4, сенаж –116, силос 20,3 процент чухлĕ янтăланă.

КĔСКЕН

## Çуралакан сахал, вилекен нумай

Чăвашстат кăтартăвĕпе кăçалхи пĕрремĕш çур çулта Чăваш Енре пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан 338 ача (4 процент) сахалрах çуралнă, 142 çын (1,7 процент) нумайрах вилнĕ. 2015 çулхи январь-июнь уйăхĕсенче республикăра 8176 ача тĕнчене килнĕ, 2014 çулта вара – 8514 пепке. Асăннă вăхăтра кăçал 8474 çын пурнăçран уйрăлнă, иртнĕ çул – 8332. Ентешсем ытларах çак сăлтавсене пула вилни палăрать: юн çаврăнăшĕн чирĕсемпе (35,4 процент), тулашри сăлтава пула (14,2 процент), шыçă чирĕсемпе (11,6 процент), апата ирĕлтерекен органсен (6,8 процент) тата сывлав (7 процент) чирĕсемпе.

Чăваш Енре пĕтĕмĕшле халăх хăй хальлĕн чакни палăрать пулсан та хулара пурăнакансен йышĕ ӳснĕ – 1187 çын. Сăмахран, Шупашкарта – 1266 çын, Çĕнĕ Шупашкарта – 216 çын. Ялсенче халăх хăй хальлĕн чакни вара 1485 çынпа танлашать.

## Çул-йĕр тума

Дмитрий Медведев премьер-министр регионсенче çул-йĕр тăвасси çинчен калакан хушăва алă пуснă. Унпа килĕшӳллĕн Чăваш Ен валли 17 млн та 334 пин те 800 тенкĕ укçа уйăрĕç.

Çак нухратпа ял çĕрĕнчи халăх пурăнакан вырăнсенче хытă сийлĕ автомобиль çулĕсем тăвĕç. Ку ĕç ялсене 2014-2017 çулсенче тата палăртнă 2020 çулчченхи тапхăрта аталантарас тĕллевпе йышăннă ятарлă программăпа килĕшӳллĕн пурнăçланĕ.

Асăннă субсидие 52 регион валли уйăрĕç. Çав шутра Мари Эл – 117,9 млн, Тутарстан – 307 млн, Киров облаçĕ – 275 млн, Чулхула облаçĕ 210,9 млн тенкĕ тивĕçĕç.

## Ăсталăха ĕçре туптаççĕ

Вырма вăхăтĕнче яланах ялхуçалăх ĕçченĕсем çитмеççĕ. Çавна май Йĕпреç районĕнчи «Путиловка» агрофирма тата «Красный партизан» колхоз ертӳçисем юлашки çулсенче хуçалăх ĕçне аслă шкулсенче вĕренекен студентсене явăçтараççĕ. Кăçалхи июль уйăхĕнче «Красный партизанра» Шупашкарти ялхуçалăх академийĕн 5 студенчĕ вăй хунă. Вĕсем сĕт-çу фермине юсанă.

«Путиловкăра» вара асăннă вĕренӳ заведенийĕн 10 студенчĕ ĕçлет. Эдуард Марушев ертӳçĕ пĕлтернĕ тăрăх – çамрăксем хăйсен тивĕçне яваплă пурнăçлаççĕ. Вĕсем ĕне витине качакасем валли çĕнетсе улăштарнă, унăн тăррине тата çĕрулми упрамалли хранилищĕне юсанă, ферма территорине тирпĕй-илем кĕртнĕ. Халĕ качакасем валли çĕнĕ вите тума тытăннă.

Унсăр пуçне çак хуçалăхра виççĕмĕш çул инженер факультечĕн студенчĕсем тăрăшаççĕ. Яш-кĕрĕм тыр-пул пуçтармалли «Енисей» комбайна юсать. Вĕсен ертӳçи – «ЧР тава тивĕçлĕ механизаторĕ» ята илнĕ Николай Захаров. Çамрăксем ăна профессi ăсталăхне алла илме пулăшнăшăн тав тăваççĕ.

**Валентина МАКСИМОВА.**

## Çивĕч ыйту

# Çĕрĕ е хуçи япăх?

**Ай, мĕн тери хитре тавралăх халĕ: пиçсе çитнĕ çырларан ырă шăршă сарăлать, тĕрлĕ тĕслĕ чечек куçа илĕртет... Уйсенчи ыраш пусси, çĕрулми ани – ыранхи куна шанăç кӳреççĕ.**

**Çумкурăк пусса илнĕ лаптăк вара чуна ыраттарать: унта культурăллă ӳсен-тăран вăй илмелле те...**



Шел, акăнмасăр юлнă ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр сахал мар паян. Акă, нумай пулмасть Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн инспекторĕсем Етĕрне районне тĕрĕслевпе çитнĕ. Унта 40 пай çĕртен (92 гектар) 4-шĕпе (7 гектар) кăна тĕллевлĕ усă курни палăрнă. Лаптăкĕсене юхăнтарнă хуçасене çĕр саккунне пăснине, агротехника ĕçĕсене иртермеллине асаилтернĕ. Çĕнĕ саккунпа ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрпе тĕллевлĕ усă курманшăн явап тыттарассине пĕлсен тин лаптăкĕсем пирки асаилнĕ тейĕн вĕсем: Росреестра пайĕсенчен хăпасси çинчен пĕлтернĕ.

Харпăрçăсене ăнланма пулать темелле. Пай çĕрĕ çинче сухаласа акма, выльăх апачĕ туса илме вăй çитереймесен пĕр-пĕр хуçалăха арендăна пама пулать. Нумай çĕрте çапла тăваççĕ. Енчен сывăхра лайăх ĕçлесе пыракан предприяти, хуçалăх пулмасан мĕн тумалла? Ирĕксĕрех пай çĕрĕнчен хăпмалла.

Сăмах май, Раççейре иртнĕ çул кăна 140 пин гектар çĕрпе тĕллевлĕ усă курманнине палăртнă. Унччен арендăна е харпăрлăха илнĕ лаптăксене те йывăç-тĕмĕ пусса илме тытăннă. Вĕсене пусă çаврăнăшне кĕртме вăхăт, укçа-тенкĕ самай кирлĕ.

Специалистсем тĕллевлĕ усă курман çĕрсене туртса илме ирĕк паракан саккун лару-тăрăва улăштарасса шанаççĕ. 2015 çулхи мартăн 20-мĕшĕнчен çĕре лайăхлатассипе тата хӳтĕлессипе ĕçсем туса иртерменшĕн паракан штраф виçи те ӳснĕ: уйрăм çынсен 20 пинрен пуçласа 50 пин, должноçрисен 50 – 100 пин, предприяти-организацисен 400-700 пин тенкĕ тӳлеме тивĕ. Пушă выртакан çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртмешкĕн тăкаксем пысăк пулни çакăн пек йышăну тума хистенĕ.

Пĕлтĕр республикăра ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр 59 пин гектар усă курмасăр выртнă. Çумкурăкпа хупланнă лаптăксем Улатăр (12,2 пин га), Элĕк (8,4 пин га), Канаш (11 пин га), Шупашкар (6,1 пин га) районĕсенче ытларах пулнă.

Пулăхлă çĕре юхăнтарнăшăн 4 предприяти-организацие, 9 – должноçри, 123 уйрăм çынна айăпланă. Шупашкар районĕнче – 61, Çĕрпӳ тăрăхĕнчи 21 харпăрçăна административлă явап тыттарнă, агротехника мероприятийĕсене ирттерме предписани çырса панă.

2013 çулхи предписанисем тăрăх йĕркесĕрлĕхе пĕтерменшĕн иртнĕ çул 2 предприяти-организаци, 3 – должноçри, 27 уйрăм çын тĕлĕшпе административлă тĕпчев пуçарнă. Материалсене Улатăр, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсенчи судсем пăхса тухса йышăнусем кăларнă. Паллах, вĕсем пурте айăплисене явап тыттарассипе çыхăннă. Сăмах май, патшалăх сăнавĕ енĕпе ĕçлекен федераци органĕсен предписанийĕсене вăхăтра пурнăçламаншăн паракан штраф виçи те ӳснĕ.

Çĕр çинче ĕçлеме вăй çитерейменнине туйса-тăр пĕлтĕр Улатăр, Шупашкар районĕсенчи çынсем лаптăкĕсене харпăрлăхран «кăларма» шутланине пĕлтернĕ. Кунта сăмах 72,67 гектар пирки пырать. Çав хушăрах кăçал Улатăр, Элĕк, Патăрьел, Канаш, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Çĕрпӳ, Шупашкар, Етĕрне, Тăвай, Елчĕк районĕсенче 4558 гектар çĕре пусă çаврăнăшне кĕртнĕ.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА, управлени ĕçченĕ.**

# Вырма, тырă хакĕ тата ытти ыйту

1-мĕш стр.

Аш-какай туса илес ĕçре чăх-чĕп фабрикисен тӳпи пысăк. Çур çулта вĕсенче производство калăпăшĕ 25 процент хăпарнă.

ЧР ялхуçалăх министрĕн çумĕ Николай Якимов каланă тăрăх – çур çулта ĕне пуçне 2507 кг сĕт сунă. Сĕнтĕрвăрри, Элĕк, Шупашкар районĕсенче виçĕ пин ытларах та. «Асаново» (Комсомольски районĕ) хуçалăхра вара кăтарту 4 пин килограмран та иртнĕ.

Кăçал акакан-сухалакан лаптăксем 573,7 пин гектара çитнĕ (пĕлтĕрхин 102,7 проценчĕ), çав шутра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем – 290,5 пин, çĕрулми 34,2 пин гектар. Акнă-лартнă лаптăксем иртнĕ çулхинчен ӳснĕ. Çав вăхăтрах Патăрьел, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне тăрăхĕсенче вăл пĕчĕкленнĕ.

Иртнĕ çул пахчаçимĕç, çĕрулми упрама 10 хранилище хута кайнă.

2015 çулхи январь тĕлне республикăра усă курман çĕр 45,2 пин гектар пулнă. Çак вăхăт тĕлне 1839,2 гектарне пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Кăçал татах виçĕ пин гектара яхăн усă курман çĕр тупса палăртнă. Вăрнар тăрăхĕнче кăна икĕ пин гектар ытла. Çав хушăрах «Алатырь-Корма» пĕрлешӳ темиçе çул юхăнса выртнă 6,8 пин гектар çинче пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем акса хăварнă.

Кăçал кĕрхи культурăсене çĕр пин гектар çинче акса хăвармалла. Кĕрхисем пысăк тухăç панине пăхмасăр хуçалăхсем унăн лаптăкне пĕчĕклетсе пыни сисĕнет.

Кăçал тĕштырă – 560 пин, çĕрулми 600 пин тонна пуçтарса илессе шанаççĕ. Хуçалăхсенче вырмана тухнă ĕнтĕ.

Чăвашстат кăтартăвĕпе ял, вăрман, сунар хуçалăхĕнчи ĕçсыннисен уйăхри шалăвĕ 13 пин тенкĕрен ытларах пулнă. Улатăр, Çĕмĕрле, Етĕрне, Йĕпреç, Пăрачкав енче унран та пĕчĕкрех.

### Саппасра та пур

Çĕр ĕçченĕсене тырă хакĕ уйрăмах хумхантарать. Тар тăкнине кура тупăшне те тивĕçлипе илес килет. РФ Ялхуçалăх министерстви малтанлăха палăртнă тăрăх – кăçал пӳлмене 100 млн тонна тырă кĕмелле. Ку пĕлтĕрхинчен 6 процент сахалрах. Çав шутра 20-25 млн тоннине ют çĕршывсене ăсатмалла. Кăçал республикăра ялхуçалăх культурисем 573,7 пин гектар йышăннă, пĕлтĕрхинчен 15,1 пин гектар ытларах. Çулталăк пуçламăшĕнче саппасра 452, 5 пин тонна пулнă. Пулас тухăçа шута илсен Чăваш Ен кĕлетĕнче пĕр млн тонна ытла «сарă ылтăн» пулмалла. Тырă рынокне йĕркелеме кăçал «Чăваш Республикинчи апатçимĕç фончĕ» унитари предприятийĕ 13 пин тонна туянма палăртнă. Вăл рынок хакĕпе илет. Енчен хак пĕчĕкрех пулсан та палăртнă хисепрен чакмасть. Гаранти хакне тыррăн хăйхаклăхне, инфляцие шута илсе палăртаççĕ. Кăçал гаранти хакĕн чи пĕчĕк виçин (НДС-а шута илсе) малтанхи хакĕсем çапла пулмалла:

Апат-çимĕç валли усă куракан 3 класлă тулă хакĕ – 8400 (пĕр тонни), 4-мĕш класли – 8000, апат-çимĕç валли усă куракан 1 тата 2 класлă ыраш – 6200 тенкĕ.

Ларура çавăн пекех Ялхуçалăх çыравне хатĕрленес тата ытти ыйтăва пăхса тухрĕç.

**Лариса НИКИТИНА.**

***Хисеплĕ вулакансем!***

**«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2016 çулăн I çуррине илсе тăмашкăн**

**июль уйăхĕнчен тытăнса август уйăхĕн 31-мĕшĕччен –**

**ЙӲНĔ ХАКПА!**

**«Хыпар» – 625,62 тенкĕ** *(кăçалхи II çур çултинчен 172,44 тенкĕ йӳнĕрех)*

**«Хыпар»-эрнекун – 325,92 тенкĕ** *(19,62 тенкĕ йӳнĕрех)*

**«Хресчен сассине» 283,62 тенкĕпе çырăнтараççĕ.**

# Хисеп те кирлĕ

Николай Ласточкин «Эльбарусовский» совхоза ертсе пынă. Вăл вăхăтра хуçалăх хăмла ӳстерес тĕлĕшпе çĕршывра темиçе хутчен те пĕрремĕш вырăн йышăннă. Николай Андреевич хăй те «ЧАССР ялхуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ. Хăмлаçăсен бригадирне – Юрий Захарова – патшалăх премине панă.

Карапашри Петр Мироновăн ячĕ те мухтавлă. Вăл Октябрьскинчи хăмла цехне вун-вун çул ертсе пынă. Унăн пултарулăхĕпе «Чувашское золото» кĕнекере паллаштарнă.

Çĕнĕ çĕр уçма хутшăннă Ростислав Ярухин Казахстанран таврăнсан «Кугеевский» совхозра вăй хунă. ЧАССР тава тивĕçлĕ механизаторĕ трактор çинчен анма пĕлмен. Ку совхозрах тăрăшнă Георгий Истомин бригадирпа унăн мăшăрĕ «ЧАССР ялхуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ятсене илнĕ.

Пултаруллă, тăрăшуллă ентешсене манас марччĕ. Вĕсен ырă ячĕсене çитес ăрусем валли упраса хăварасчĕ.

**Анатолий МАКСИМОВ. Сĕнтĕрвăрри районĕ, Услă Пукаш ялĕ.**

◆ ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Илĕртет хресчен çурчĕ




**Етĕрне районĕнчи Тури Ачакра иртен-çӳрен çул хĕрринчи йывăç çурта, юнашарти çĕнĕ çил арманне, çатан картана тĕлĕнсе сăнать. Вĕсем кăна-и, ĕлĕкхи хресчен килĕпе паллашма аякран та килеççĕ. Анлă картишĕнче хура пӳрт, лаç ...**

## Çĕнелсе илемленнĕ музей

Вырьăх картипе хура çурт тăррине ĕлĕкхилле улăмпа витнĕ. Пӳрт вăхăт иртнĕ май хуралса пусăрăнма ĕлкĕрнĕ пулсан, хуралтăсем вĕр çĕнех. Хура çуртра мăрьесĕр кăмака, кравать. Лаçри вучахра пысăк хуран çакăнса тăрать. Кил-тĕрĕшре куллен усă куракан савăт-сапа туллиех кунта. Вучах чĕртме юнашарах – вутă купи. Вите-сарайра вырьăх йĕр хăварайман. Çĕнĕ пĕрене хĕвел çутипе çуталса ларать.

Пӳртри кашни япала хресчен пурнăçне, йăли-йĕркине уçса парать. Вырăн виттине, минтерсене чăвашăн çĕр пин тĕррипе илемлетнĕ. Кăмака çумĕнчи сăпкара та тĕрленĕ япаласем. Алăкран кĕрсенех пир тĕртмелли, çăм арламалли тата ытти хатĕрсем.

Картишĕнче кăна мар, пахчара та çирĕп алă хуçаланни палăрать. Çĕрулми, пахчаçимĕç ăнса пулнă. Йăран çинче йĕтĕн те çитĕнет – курма килекенсене кăтартма. Пур çĕрте те таса, типтерлĕ, илемлĕ. Кунта ĕçчен çемье пурăнать темелле. Анчах чаплă çурт-йĕр хуçи – халăх. Унăн пурлăхĕ упранать кунта.

– Çурта 1984 çулта, «Ленинская искра» колхоз председателĕнче ĕçленĕ Аркадий Айдак пуçарнипе лартнă. Ăна экспонатсемпе пуянлатма ялĕпех хутшăнчĕç. 1993 çулта истори палăкĕ «Халăх музейĕ» ята тивĕçрĕ. Чăн та, вăхăт иртнĕ май çурт-йĕр самай юхăнма ĕлкĕрчĕ. 90-мĕш çулсенче хуçалăх йывăрлăха кĕрсе ӳкнипе ăна юсаса çĕнетме укçа-тенкĕ енчен пулăшаймарĕ. Чăваш Республикинчи ялсенче комплекслă майпа çурт-йĕр тума тата тирпей-илем кĕртме ятарлă программа хута кайсан унта хутшăнма шутларăмăр, – каласа парать Мăн Шемертен ял тăрăхĕн ертӳçи Альбина Егорова. – 2013 çулта конкурс витĕр тухса халăх музейне çĕнетме грант илтĕмĕр. Картишĕнчи хуралтăсене тĕпрен çĕнетрĕмĕр. Пӳрте те юсама тиврĕ. Пурĕ 1 млн та 275 пин тенкĕ тухса кайрĕ. Çав шутра республика бюджетĕнчен 950 пин тенкĕ уйăрчĕç. Федерацин ял территорийĕсене аталантарас тĕлĕшпе йышăннă программăпа вара музее культура енĕпе пуянлатма тăрăшрăмăр. Унпа юнашарах çил арманĕ турăмăр, чăвашсен йăлипе юпа лартрăмăр. Территорине тирпейлесе илемлетрĕмĕр.

**– Хресчен çуртне тепĕр хут чĕртсе тăратас ĕçе камсене явăçтартăр?**

– Кирек мĕнле ĕçе те пĕлнĕпĕлмен тăваймăн. Халăх музейне уйрăмах. Ун тăрăх çамрăк ăру несĕлсен пурнăçĕпе, йăли-йĕркипе паллашать. Юсаса çĕнетме тытăниччен ӳнерçĕсем пире проект-эскизсем хатĕрлесе пачĕç. Вĕсене тĕпе хурса ĕçлерĕмĕр те. Тирпей-илем кĕртме ял çамрăкĕсем те пулăшрĕç.

**– Кирек мĕнле чаплă япала та пăхса тăмасан юхăнать, кивелет.**

– Унччен кунта пĕр çын кăна ĕçленĕ. Халĕ, пурлăх хушăннă май, иккĕн вăй хураççĕ: музей ертӳçипе хуралçă. Вĕсемех территорие тасатса-тирпейлесе тăраççĕ.

## Чăвашла е турккăлла?

Халăх музейĕ яланах уçă. Канмалли кунсенче те ĕçлет вăл. Çуллахи кунсенче курма килекенсем сахал мар.

– Картиш çынсемпе тулсан хĕпĕртетĕп, – кăмăллăн пĕлтерет музей ертӳçи Людмила Петрова. – Акă нумай пулмасть кану лагерĕнчен 60 ача килсе кайрĕ. Етĕрне тăрăхне туристсем çитсен тӳрех кунта курма илсе килеççĕ.

Етĕрне районĕнчи Тури Ачак тăрăхне туристсем Китай, Турци тата ытти çĕршывран та çул хывнă.

– Пĕррехинче Турцирен арçынпа хĕрарăм çитрĕç. «Кăсен тăлмачи ăçта-ши? Хăнасене мĕнле ăнлантарас ĕнтĕ?» – тесе пăшăрханатăп. Унтан, мĕн пулать те мĕн килет тенĕн, калаçăва вырăсла пуçларăм. «Пирĕнпе чăвашла калаçмалла», – сасартăк мана пӳлчĕ арçын. Вĕсем чăваш чĕлхине тĕпчеççĕмĕн, йăла-йĕркене тĕплĕрех пĕлесшĕн, – асаилет Людмила Витальевна пулни-иртнине.

Китай хăнисене вара çĕнĕ хуралтăсенчен таврана сарăлакан йывăç шăрши тĕлĕнтернĕ. «Ах, мĕнле ырă шăршă!» – тесе пĕренене перĕнсе тарăн сывланă. Унтан лаçра выртакан вутă купине курсан: «Ку тата мĕн?» – тĕлĕнĕвне пытарайман вĕсем. «Вутă, кăмака хутмалли», – тенĕ ертӳçĕ. Лешсем çав-çавах ăнланманнине кура кăмакана хутсах кăтартнă. «Китайра вутă сахал-шим? Пĕрремĕш хут курнăн тĕлĕнсе паллашрĕç, – каласа парать Людмила Петрова. – Кăçал Францирен те хăна кĕтсе илтĕм. Вăл чăвашсен пурнăçĕпе кăсăкланчĕ, çине-çинех ыйтса пĕлме тăрăшрĕ».

Хăнасене вырăнти «Вирьял» халăх ансамблĕ те час-часах савăнтарать. Илемлĕ юрă-кĕвĕпе чăвашсен ĕлĕкхи пурнăçне, кулленхи ĕçĕ-хĕлне сăнлать. Несĕлсен пуянлăхĕ ăруран ăрăва куçса пырсан чăваш йăли-йĕрки, чĕлхи нихăçан та манăçа тухмĕ.

**Лариса НИКИТИНА.**

◆ УЯВ

# Пĕчĕк ялăн пысăк савăнăçĕ



Питрав хыççăн, вырма çитиччен, Апаш тăрăхĕнчи ялсен Кĕçнерни ярмăркки пуçланнă. Вăл ытларах Лакăр ялĕнче иртнĕ.

Çак паллă пулăма тĕпе хурса Эсеккассисем кăçал хăйсен ял уявне ирттерме шутларĕç. Ăна Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине тата Раççейри – Литература, Чăваш Енри Константин Иванов çулталăкĕсене халалларĕç. Çавна май ялйыш Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă ентешсен ячĕпе лартнă палăка юсаса çĕнетрĕ. Халĕ унта çӳреме те кăмăллă.

Уява йĕркелеме ял хастарĕсем тăрăшрĕç. Вĕсене ятранах асăнса хăварас килет: Георгий Алексеев, Виталий Григорьев, Петрпа Владимир Егоровсем. Халăхшăн мĕн чухлĕ ырă ĕç пурнăçларĕç вĕсем. Паллах, ялйыш та айккинче юлмарĕ, вăй çитнĕ таран пулăшрĕ.

Уява Апаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Александр Владимиров уçрĕ. Унтан пурте пĕрле «Асран кайми акисухи» юрра шăрантартăмăр. Сумлă хăнасем те сăмах илчĕç, ял халăхне малашне те пĕр-пĕринпе туслă пурăнма сунчĕç.

Юрă-кĕвĕпе вара Шăнкасри «Шуракăш» ансамбль савăнтарчĕ. Александр Васильев юрăçа та ялйыш кăмăлласа йышăнчĕ. Артистсемпе пĕрле юрларĕ, ташларĕ. Кирек ăçта пурăнсан та çын хăй çуралнă кĕтесне, ача чухне выляса ӳснĕ вырăнсене нихăçан та манмасть. Тăван тăрăха çитсе курма тăрăшать, тус-юлташĕпе курнăçать. Çакă мар-и вăл уншăн пурнăçри савăнăç, телей?! Çавăнпа та ял уявне çулсеренех ирттермеллине, вăл пĕр-пĕринпе туслашма пулăшнине палăртрĕç Эсеккассисем.

Уявра ватă çынсене те сумларĕç. Вĕсене ял тăрăхĕн пуçлăхĕ парнесем парса чысларĕ. Эсеккасси пĕчĕк ял пулсан та ача-пăча кун çути курать кунта. Эппин унăн малашлăхĕ пурах. Çулталăкран иртнĕ Арсений Макаровпа Юля Никитина (унран кĕçĕнрех) та парнеллĕ пулчĕç. «Ачасем ытларах çуралччăр», – терĕ Александр Владимиров çамрăк çемьесене саламланă май.

Уяв йăли-йĕркине пăхăнса Людмила Иванова сăра та хатĕрленĕ. Кăпăклă ĕçмене кашниех тутанса пăхрĕ, пахаларĕ.

**Ксения МИХАЙЛОВА.**
**Шупашкар районĕ.**

◆ КОНВЕРТРА СĂНАРЛАННĂ ПУРНĂÇ

# Каснă чĕлĕ çыпçăнмасть

Малтанхи кин ывăл çинчен тĕрлĕ сассхура сарать. Вăл киревсĕр, тăрлавсăр имĕш. Хăйĕн ачипе те калаçмасть. Çав хушăрах ман çинчен те темĕн те пĕр калать. Хăй вара пур енĕпе те таса иккен.

Гальăпа Саша çирĕм çултах пĕрлешрĕç. Эпир, ашшĕ-амăшĕ, хирĕç пулнине те шута илмерĕç. Ара, Галя ача кĕтнине пула çемье çавăрма васкарĕç. Çитменнине вĕсем пĕрпĕрне питĕ юрататчĕç. Телейлĕ мăшăр уйăласса шанманччĕ. Чаплă туй туса пĕрлештертĕмĕр-çке вĕсене.

Ун чухне иккĕшĕ те аслă шкулта вĕренетчĕç. Оля çуралсан пурте савăнтăмăр. Эпир, мăшăрăмпа, çамрăксене пулăшас тĕллевпе мăнука пăхма тытăнтăмăр. Эпĕ вăхăтлăха ĕçлеме пăрахрăм. Ольăна яла илсе килтĕмĕр. Гальăпа Саша канмалли кунсенче пирĕн пата килсе çӳрерĕç.

Кинпе ывăл институт пĕтернĕ тĕле Оля та самаях пысăкланчĕ. Çавна май ăна ашшĕпе амăшĕ хулана илсе кайрĕç, ача садне вырнаçтарчĕç. Эпĕ те ĕçлеме пуçларăм.

Мăнук садике çӳренĕ май час-часах чирлетчĕ. Галя унпа ларма каллех ерĕçмерĕ. Тупăшлă ĕçе вырнаçнăран ăна çухатасран шикленчĕ. Сашăн та вăхăчĕ çукчĕ. Çавăнпа та Ольăна каллех яла илсе килтĕмĕр. Хамăр ачаран та çывăхчĕ вăл пире. Ывăлпа кин укçа ĕçлесе илме пултарччăр, лайăх пурăнччăр тесе тăрăшрăмăр. Анчах усси пулмарĕ. Галя ĕçри пуçлăхĕпе çыхланса кайрĕ те çемье саланчĕ. Мăнука хăйпе пĕрле илсе кайрĕ. Ăна ашшĕпе курнăçма чарчĕ. Çапла эпир те юратнă мăнуксăр юлтăмăр.

Саша алимент укçине вăхăтра тӳлесе тăчĕ. Çапах та вăл хĕрĕпе курса калаçма пултараймарĕ. Мĕн тери йывăрччĕ ăна ун чухне. Никампа калаçса чунне йăпатаймастчĕ. Çавăнпа час-часах яла çӳреме тытăнчĕ. Сăра-эрехпе иртĕхмен, пирус туртманскере ял хĕрĕсем те тиркемерĕç. Уйрăлнă хыççăн виçĕ çул иртсен ывăлăм кӳршĕ хĕрĕпе Иринăпа пĕрлешрĕ. Вĕсен икĕ ача çуралчĕ. Саша пурнăçĕ йĕркеленнĕрен эпир те савăнтăмăр.

Пурнăç урапи хăй еккипех çаврăнать. 11 çул иртсен Галя каллех ывăл патне таврăнчĕ. Упăшки çамрăк арăм тупнă иккен. Ольăпа иккĕшне урама кăларса янă. Çапла вара малтанхи кин çурăк валашка умĕнче юлнă.

Çук, нимĕн чухлĕ те шеллемерĕ ăна Саша. Ара, хăй вăхăтĕнче вăл унăн чунне витернĕçке. Халĕ укçа-тенкĕ кирлĕ чухне каллех малтанхи упăшки патне килнĕ. Оля кăçал 11 класс пĕтернĕ май нухрат чылай кирлĕ.

Çĕнĕ кин, паллах, кăмăлсăрланчĕ. Ăна лайăх ăнланатăп эпĕ. Енчен те Саша хальччен Ольăпа курнăçнă пулсан вăл Иринăшăн та çывăх çын шутланатчĕ. Унсăр пуçне упăшки пĕрремĕш арăмне халĕ те килĕштернине чухлать вăл. Çавăнпа Ирина Гальăна çемйи çывăхне ямарĕ.

Ольăна пулăшу пултăр тесе алимент çумне эпир те хушса тӳлеме тытăнтăмăр. Ара, унра хамăр юн чупать-çке. Гальăпа хулара тĕлпулатпăр. Укçа паратăп та унран расписка илетĕп. Çапах та унпа курнăçма çав тери йывăр мана. Мĕн чухлĕ хуйхăсуйхă, пăшăрхану кӳчĕ вăл пирĕн çемьене.

Галя пирĕн çинчен ырă мар калаçни хăлхана кĕчĕ пĕррехинче. Эпир ăна пулăшмастпăр иккен. Ольăна йышăнмастпăр, пирте тăванлăх туйăмĕ çук имĕш. Пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăнăва кам татрĕ-ши малтан? Мăнука пиртен хăех уйăрчĕ-çке. Каснă чĕлĕ çыпçăнмасть çав.

**Валентина САМОЙЛОВА.**
**Муркаш районĕ.**

ХӲТЛӖХ ЯЛЙЫШ ХУҪАЛӐХ СЫВЛӐХ КИЛ ТӖПЕЛ

## ЫЙТУ – ХУРАВ

### Сырлан ҫимӗҫ памасть

**Сырлан туянса лартрӑм. Вӑл самай ӳсрӗ, анчах ҫырлине курмастӑп. Ами те, аҫи те тесе суйса сутрӗҫ пулас мана. Халӗ вӗсене мӗнле уйӑрса илмелле-ши? Ҫынсенчен ыйткаларӑм, анчах пӗлекен тупӑнмарӗ. Пирӗн пӗчӗк ялта сырлан ӳстерекен ҫук.**

**Е. ЕГОРОВА.**
**Канаш районӗ,**
**Чакаҫ ял тӑрӑхӗ.**

Сырлан йывӑҫҫи ҫинче ҫырла пачах пулмасан вӑл «аҫа» пулнине кӑтартать. Енчен ҫырли сахал – «ама». Анчах ҫывӑхра «аҫа» йывӑҫ ҫукран шӑркана лараймасть, ҫырла параймасть. Кашни пилӗк-ултӑ «ама» пуҫне пӗр «аҫа» сырлан кирлӗ.

Вӗсене мӗнле уйӑрса илмелле? Ҫулталӑкри сырлан тӑрӑх уйӑрма йывӑр. 3-4 ҫултисене папак тӑрӑх ҫӑмӑллӑнах пӗлме пулать. Вӗсене ҫуркунне папак кӑларсанах куҫарса лартаҫҫӗ. «Аҫа» хунавӑн вӑл шултра, ҫаврака, 5-7 хупӑран (чешуя), «амин» вара ҫинҫе, вӑрӑм, икӗ-виҫӗ хупӑран кӑна тӑрать. Енчен сирӗн сырлан ҫинче ҫырла пач курӑнмасан «аҫи» пулнине пӗлтерет. Кӗркунне (ҫуркунне лайӑххах) «ама» сырлан туянса пӗр-пӗринчен 2 метртан кая мар лартмалла. Ҫемье йывӑҫҫине пӗрле – «аҫипе» «амине» – лартсан кӑна ҫимӗҫ парӗ.

### Ҫӑл чаватпӑр

**Халӗ нумайӑшӗ картишӗнчех ҫӑл чавать. Анчах специалистсене тытса ӗҫлеттерме хака ларнӑран хамӑр вӑйпах тӑвасшӑн. Ҫӑл вырӑнне мӗнле суйласа илмелле-ши?**

**Г. СЕРГЕЕВ.**
**Йӗпреҫ районӗ.**

Сӑнанӑ тӑрӑх – ҫӗр айӗнчи шыв вырӑнӗ яланах айлӑм, тӗмескеллӗ. Тата унта ирхине сывлӑм вӑйлӑ ӳкет.

Йывӑҫсем те ҫӑл вырӑнне палӑртма пулӑшаҫҫӗ. Сӑнанӑ тӑрӑх – улӑхри пӗччен юман шыв ҫулӗсем хӗресленнӗ вырӑнта ӳсет. Хурӑн, хӗрлӗ хӑва, вӗрене, ҫирӗк пӗр еннелле тайӑлсан ҫӗр айӗнче нӳрӗк тӑнине систерет. Апла вӗсемпе юнашар хӑрамасӑрах ҫӑл чавмалла.

Нӳрӗк вырӑна курӑк та кӑтартать: вӑл шӑрӑх ҫанталӑкра типмест, сӗтеклӗ, симӗс. Курӑк ҫӑра ашкӑрса ларсан – шыв ҫиелтех.

Хурт-кӑпшанкӑ та ҫӑл вырӑнне тупма пулӑшать. Енчен хӗвел аннӑ хыҫҫӑн вӑрӑмтуна пӗр вырӑнта ҫаврӑнса тӑрсан – ҫӗр айӗнче шыв пур. Лаптӑка хӗрлӗ кӑткӑ иленнӗ пулсан унта типӗ, ҫӑл чавса вӑхӑта сая яни кӑна.

Тӗтре шывлӑ ҫӗртре аялтан сарӑлать.

Пӗр пек кирпӗч илсе виҫмелле, унтан темиҫе вырӑнта ҫӗре чавса чикмелле. Талӑкран кӑларса каллех виҫмелле – йывӑртарах кирпӗч вырӑнӗнче хӑюллӑнах ҫӑл чавмалла.

Шыв вырӑнне маятникпа та шырама пулать. Ылтӑн ҫӗрре ҫиппе ҫыхмалла, унӑн вӗҫне тытса кил-тӗрӗшре, пахчара майӗпен утмалла. Ҫӗрӗ малалла-каялла куҫсан – шыв пур. Хулӑн пӑралука Г саспалли пек авмалла, кӗске пайӗнчен тытмалла (вӑрӑммаххи алӑра ҫӑмӑллӑнах ҫаврӑнма пултартӑр) та территорире хуллен утса ҫӳремелле. Ку мел маятникпа усӑ курнӑ пекех.

Пусӑ чавиччен вылӑх-чӗрлӗх карти, туалет тата таврана варалакан ытти хуралтӑ ӑҫтарах вырнаҫнине шута илмелле. Ҫӑла вӗсенчен 25-30 м аяккарах вырнаҫтармалла. Мӗншӗн тесен нитратсем шыва лексе унӑн тутине улӑштараҫҫӗ тата сывлӑхшӑн та сиенлӗ. Ҫӑла айлӑм, ҫурхи шыв пухӑнакан вырӑна та чавмаҫҫӗ.

Пусӑ таврашне яланах типтерлӗ тытмалла, ҫиелтен ҫурхи шыв юхса кӗресрен асӑрханмалла. Унран 20 метр ҫывӑхра вылӑх-чӗрлӗхе шӑварма, машина, кӗпе-йӗм ҫума юрамасть. Шыв ӑсма яланах пӗр витрепе усӑ курмалла.

## ВЫЛЬӐХ-ЧӖРЛӖХ



### Паха апат кирлӗ

**Чӑхсем мӗншӗн хӑйсен ҫӑмартине ҫиеҫҫӗ-ши? Ҫак сиенлӗ йӑларан епле хӑтӑлмалла?**

**Зинаида ХАРИТОНОВА.**
**Канаш районӗ.**

Сӑлтав – апат-ҫимӗҫре. Ҫӑмарта тӑвакан чӑх-чӗпе тыр-пул ҫитерни ҫеҫ ҫителӗксӗр. Вӗсен апатӗнче кунне 5-7 г белок пулмалла. Ҫавна май апата пулӑ ҫӑнӑхӗ, ҫусӑр тӑпӑрчӑ хушмалла.

Ҫӑмарта хуппине те хӑйне ҫеҫ мар, апатпа хутӑштарса памалла. Унсӑрӑн вӗсем ҫӑмартана шӑтарса ҫиме хӑнӑхаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех апата люцерна, вӗлтӗрен, сухан, ытти пахчаҫимӗҫ тата курӑк хушмалла.

Чӑх хӑйӗн ҫӑмартине ҫиесси унӑн кӑмӑл-туйӑмӗнчен те килет: ҫывӑрнинчен, ытти сӑлтавран та. Тен, сӑвӑс ернӗ ӑна. Ҫутҫанталӑк хӑвӑрт улшӑнни те, ҫутӑ ҫитменни те, картара ют чӑх пурри те сиенлӗ ӗҫ тума хистет. Ҫавӑнпа та чӑх-чӗпе айӑпличчен ҫак енсене тишкермелле.

### Йывӑрӑшне кура

**Сӑнанӑ тӑрӑх, сысна тӑвар хушнӑ апата ытларах кӑмӑллаҫҫӗ. Ҫакӑ сиенлӗ мар-ши?**

**Иван КСЕНОФОНТОВ. Элӗк районӗ.**

Сысна тӑвар шайне ҫав тери аван уйӑрать. Пӗрне вӑл ытларах кирлӗ, теприне – сахалрах. Нормӑна шута илсен апата хушакан тӑвар виҫи вылӑх виҫипе ҫыхӑннӑ. Тӗслӗхрен, 120 килограмлине талӑкра 14 грамм тӑвар кирлӗ. 240 килограмлине е унран пысӑкраххине – 20 грамм. Анчах та килти хуҫалӑхра эпир сыснана сӗтел ҫинчи каяшсене ҫитерме хӑнӑхнӑ. Шӑпах кун пек чухне вӑл тӑвара наркӑмӑшланма пултарать. Ҫаврӗнчен сӗлеки юхсан, юнлӑ варвиттине асӑрхасан, тӗртӗм е шӑнӑр туртнине, хӑлхипе сӑмси кӑвакарнине курсан сыхӑ пулӑр, ҫакӑ вылӑх наркӑмӑшланнине пӗлтерет. Ветеринар киличчен сысна ҫурине таса шыв (1-3 литр) ӗҫтерӗр, унта пурӑ ирӗлтерсен аван. Вӑл организма апат тӑварӗпе ытлашши пех лекнӗ натрие усал ӗҫ тума памасть.

### Самӑртма кӑна юрӑхлӑ

**Икӗ ҫул каялла ӗне улӑштарма шухӑшларӑм. Пушмакран хамах ӳстерӗп терӗм. Ӗмӗрӗпех фермӑра ӗҫлетӗп, хамӑн ӗнесене лайӑх пӗлетӗп. Пӗри улттӑмӗш ҫул виҫӗ пӑру пӑруласа парать. Вӗсенчен пӗрне туянса ӳстерме шут тытрӑм. Лайӑх ӳсрӗ, ӳт хушсах пычӗ. Амӑшӗ тына та, вӑкӑр та туса паратчӗ. Икӗ хут пӗтӗлентертӗмӗр пушмака, анчах усси ҫук. Пӑру ӳстерсе йӑнӑшрӑм-ши?**

**Тамара ГАЛКИНА. Красноармейски районӗ.**

Ӗне – йышлӑ пӑрупа савӑнтаракан вылӑх мар. Иккӗ пӑрулани те сайра-хутра кӑна тӗл пулать. Енчен те сирӗн вылӑхӑн амӑшӗ тына е вӑкӑр кӑна пӑрулanӑ пулсан ӗҫ-пуҫ чиперех пулатчӗ. Пӑрулanӑ икӗ ҫамрӑк вылӑхран (вӑкӑрпа тынаран) пулнӑ тынасен 90 процентӗ пӗтӗленеймест. Зоотехниксем кунашкаллисене фримартинсем теҫҫӗ. Вӗсем ыттисенчен ытла уйрӑлса тӑмаҫҫӗ, ҫавах кӗлеткине тишкерсен уйрӑмлӑх пуррине асӑрхатӑн. Ытти вылӑх ҫине утланма та пултараҫҫӗ, анчах хӑйсене апла тума памаҫҫӗ. Ахӑртнех, сирӗн тына самӑртма кӑна юрӑхлӑ.

### Маститран сиплерӗм

Пӑруланӑ хыҫҫӑн (ытларах пӗрремӗш хут) ӗнене мастит чирӗ аптрататъ. Вӑл вӑраха тӑсӑлать. Ӑна ҫак мелпе сиплемелле: малтанах ҫиллине ӑшӑ шывпа ҫуса тасатмалла, сӗте суса илмелле. Ҫӗрулми чечекӗнчен хатӗрленӗ ятарлӑ шӗвекпе сӑтӑрмалла, унтан – кӗпе-йӗм супӑнӗпе. Супӑне ҫӗрулми чечекӗн шӗвекӗнче йӗпетмелле.

Настойкӑна вара ҫапла хатӗрлемелле: ҫур литр банкине ҫӗрулми чечекӗ тултармалла, хӗрринчен шурӑ эрех ямалла. Полиэтилен хупӑлчапа витсе тӗттӗм вырӑна 2 эрнене лартмалла, вӑхӑт-вӑхӑт силлесе илмелле.

Ӗне ҫиллине кашни сумассерен ятарлӑ шӗвекпе тата супӑньпе сӑтӑрмалла. Эпӗ кунне 2-3 хутчен ҫапла турӑм.

**Валентина НИКОЛАЕВА.**
**Патӑрьел районӗ.**

## ТӖПЕЛ

### Чиерен – тутлӑ ҫимӗҫ

**«ШАРМ» МУСС**

*Кирлӗ пулать: 3 стакан чие ҫырли, 1/2 чей кашӑкӗ ванилин, 1 апат кашӑкӗ желатин.*

1. Желатина 1/2 стакан шыва ярса 30 минут лартмалла, кӳпчесен савӑта ӑшӑ шыва вырнаҫтармалла – желатин лайӑхрах ирӗлме. Сивӗтмелле.

2. Чиене вӑрринчен тасатмалла, сахӑрпа тата ванилинпа нимӗр пуличчен хутӑштармалла. Сахӑра тутине кура ямалла.

3. Нимӗре желатин ярса лайӑх пӑтратмалла, пӗчӗк вазӑсене тултармалла, сивӗ вырӑна 3 сехете лартмалла.

**ПЕЧЕНИ**

*Кирлӗ пулать: 2 стакан кефир, сахӑр, 300 г маргарин, 1/2 чей кашӑкӗ апат соди, 5 стакан ҫӑнӑх, чие (вӑррисӗр).*

1. Чуста ҫӑрма ҫӑнӑха апат соди хушмалла, маргарина теркӑпа вӗтетмелле. Унтан кефир ярса чуста ҫӑрмалла. 1 сехете холодильника лартмалла.

2. Чустана 4 мм хулӑнӑш йӗтӗрлемелле. Пысӑках мар касӑкпа касмалла. Кашнине чие хурса сахӑрпа сапмалла, чустана рогалик пек ҫавӑрттарса хумалла. 180 градус вӗрилентернӗ духовкӑра 30 минут пӗҫермелле.

### Тӑвар вӑрттӑнлӑхӗ

Тӑварпа апат пӗҫернӗ чухне кӑна мар, кил-тӗрӗшре те усӑ курма пулать.

✓ Тумтире е ытти япалана утюгпа ӗнтсен ҫав вырӑна сивӗ шывпа йӗпетмелле, ҫиелтен тӑвар сапмалла. 20 минутран тӑвара силлесе тӑкмалла, япалана ҫӑхемелле.

✓ Кавире лайӑххах тасатма ун ҫине темиҫе чӗптӗм тӑвар сапмалла, кайран пылесоспа е щеткӑпа пуҫтармалла.

✓ Ҫӑмарта пӗҫернӗ чухне шыва кӑштах тӑвар хушсан вӑл юхса тухмасть.

✓ Печени пӗҫернӗ чухне противень ҫине тӑвар сапсан – ҫунмасть.

✓ Сӗт ҫунсан тутине лайӑхлатма тӑвар чӗптӗм ямалла. Вӑл сӗте йӳҫӗхесрен те упрать.

✓ Пӑтранчӑк ӳсен-тӑран ҫӑвне тӑварпа ҫутатма пулать: 1 л ҫӑва 1 чей кашӑкӗ тӑвар ямалла.

✓ Ҫӑкӑр савӑтне кӑштах тӑвар хурсан ҫимӗҫ кӑвакармасть. Ҫӑмарта шуррине тӑвар ярса пӑтратсан лайӑххах кӑпӑкланать.

✓ Чейпе вараланнӑ япалана тӑвар янӑ вӗри шывра ҫумалла.

✓ Ҫӗнӗ, чукун ҫатмара тӑвар хӗртсен ҫимӗҫ ҫунмасть.

## ЧУНА УҪСА

**Чиркӳре 3 ҫула ҫитеймен ачасен сывлӑхӗшӗн ҫурта лартма юрамасть тенине илтрӗм. Тӗрӗсех-ши ҫакӑ?**

**Анна ВЛАДИМИРОВНА.**
**Шупашкар районӗ.**

Ку тӗшмӗшпе ҫыхӑннӑ. Чиркӳ ҫурти – эпир ӗненнине, Турӑ умӗнче «ҫуннине» кӑтартать. Енчен ачана православи чиркӗвӗнче тӗне кӗртнӗ пулсан унӑн сывлӑхӗшӗн асӑнса ҫырса пама, ҫурта лартма юрать.

### Юратнӑ юрӑ

**«Хресчен сасси» хаҫата чылай хушӑ ҫырӑнса илетӗп. Мана усӑллӑ сӗнӳсем, хыпарсем килӗшеҫҫӗ. Пӗррехинче Вячеслав Христофоров Вӑрмар районне концертпа килсен атте ҫинчен юрӑ юрларӗ. Сӑмахӗсене хаҫатра пичетлесе кӑларма май сук-ши?**

**Надежда ИВАНОВА.**
**Вӑрмар районӗ, Пысӑк Енкасси ялӗ.**

### Атте

*Вячеслав Христофоров репертуарӗнчи юрӑ*

1. Ах, аттеҫӗм, ах, аттеҫӗм,
Ма хӑвартӑн халь пире?
Ах, аттеҫӗм, ах, аттеҫӗм,
Тунсӑхпа тулать чӗре.
*Хушса юрламалли:*
*Кантӑкран пӑхса ташлаҫҫӗ,*
*Эсӗ лартнӑ йывӑҫсем.*
*Чӗрене ҫурса яраҫҫӗ,*
*Эс калanӑ сӑмахсем.*
*Курас килет, илтес килет*
*Тӑван атте куллине,*
*Курас килет, илтес килет*
*Тӑван атте сассине.*
2. Каҫарсам пире аттемӗр,
Итлемен пуль хӑш чухне.
Кайран ҫеҫ туйса илетпӗр,
Хамӑр йӑнӑш тунине.
*Хушса юрламалли.*
3. Никама та эп сунмастӑп,
Тӑвансене ҫухатма.
Аннене те, аттене те,
Пӗлес пулать упрама.
*Хушса юрламалли:*
*Вӗсем пирӗнпе ҫумра чух*
*Телейлӗ эпир пурте.*
*Анчах ҫакна ӑнланатпӑр,*
*Ҫухатсан ҫеҫ вӗсене.*
*Курас килет, илтес килет*
*Тӑван атте куллине.*
*Курас килет, илтес килет*
*Тӑван атте сассине.*

## СЫВЛĂХ

## Редис



Кунне 4-5 редис çиме тăрăшмалла. Вăл питĕ усăллă тымарçимĕç. Унта С, В, РР витаминсем пур. Лайăх шăршăллă эфир çăвĕ апата ирĕлтерме пулăшакан ферментсене кăларма пулăшать. Унсăр пуçне редисра кальци, фосфор, кали, магни чылай.

**Вăл шăнса пăсăлнинчен пулăшать.** Урăхла каласан, антибиотик майлах çак тымарçимĕç: организма лекнĕ бактерисене вĕлерет.

**Шыçă чирĕсенчен сыхлать.** Редисра антоциан – чăн-чăн сăрă пур. Вăл рак клеткисене аталанма памасть. Çавна май организмра шыçă чирĕ пулас шанăç сахал.

**Юнри гемоглобин шайне ўстерет.** Ку тымарçимĕçре тимĕр нумай. Шăпах вăл гемоглобин шайне лайăхлатать.

**Ŭт-тире ватăласран упрать.** Ку тĕлĕшпе С витамин пулăшать. Редисра вăл чылай.

**Ăш хытнинчен пулăшать.** Çак пахчаçимĕç сўслĕ ўсен-тăран шутне кĕрет. Çавăнпа та пыршăлăха лайăх ĕçлеттерет.

**Пĕлме:** енчен те эсир гастритпа е язвăпа аптратăр пулсан редис çиме кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен вăл çак чирсене аталантарма пулăшать.

## Шăнăр туртсан...

***Ыратакан вырăна массаж тумалла.***

7 минут массаж туни юн çўрессине лайăхлатать, тĕртĕмсене вăйсăрлатать.

***Тĕрĕс апатланмалла.***

Хуратул, çăмарта, çулçăллă салат, шалча пăрçи, мăйăр ытларах çимелле. Вĕсенче магни чылай. Вăл тĕртĕмсене вăйсăрлатать, шăнăр туртнинчен упрать.

***Стресран сыхланмалла.***

Стресс вăхăтĕнче клеткăсем вăй çухатаççĕ, тĕртĕмсем вара туртăнаççĕ. Çавна пула шăнăр туртать. Енчен те кулянатăр, пăшăрханатăр пулсан чĕре курăкĕпе е кушак курăкĕпе усă курăр.

Час-часах шăнăр туртсан терапевт е хирург патне кайăр.

## Çимелле е çук?

Сысна ашĕ пур çыншăн та юрăхлă мар. Енчен те организмра холестерин шайĕ пысăк пулсан çак аша çиме сĕнмеççĕ тухтăрсем. Мĕншĕн тесен çак вещество унта ытлашшипех. Пурăна киле атеросклероз чирĕ аталанма пултарать. Унсăр пуçне инфаркт е инсульт пулас хăрушлăх пур.

Самăр çыннăн та сысна ашĕпе иртĕхмелле мар. Вăл калориллĕ аш шутланать. Çавна май ўт хушаслăх ўсет.

Пĕверпе тата ват хăмпипе чирлисен те ăна асăрханса çимелле. Сысна ашне ирĕлтерме сирĕн организмра ферментсем çитеймĕ.

**Пĕлме:** енчен те эсир çирĕп сывлăхлă пулсан çак аша эрнере икĕ хутчен çиме юрать.

## Иммунитета çирĕплетме

**Клевертан:** пĕр литр банкине типĕтнĕ клевер чечекĕ тултармалла, хĕррипченех шурă эрех ямалла, хупăлчапа витсе тĕттĕм вырăнта 2 эрне лартмалла, вăхăт-вăхăт силлесе илмелле. Апат умĕн 15 минут маларах кунне виçĕ хутчен 20-30 тумлам ĕçмелле. Клевертан хатĕрленĕ настойка юна тасатать, юнри холестерин шайне чакарать.

**Анăс курăкĕнчен (девясил):** 3 апат кашăкĕ анăс курăкĕн вĕтетнĕ тымарне 0,5 л кагора хушмалла, вăйсăр çулăм çинче 5 минут тытмалла, тĕттĕм вырăнта 10 кун лартмалла, сăрăхтармалла. Апат умĕн 15 минут маларах кунне виçĕ хутчен 1 чей кашăкĕ ĕçмелле. Ку настойка апат аннине ўстерет.

**Чей курăкĕнчен (душица):** 300 мл шурă эрехе 3 апат кашăкĕ чей курăкĕ ямалла, тĕттĕм вырăнта 1 эрне лартмалла, сăрăхтармалла. Апат умĕн 15 минут маларах кунне 2-3 хутчен 35-40 тумлам ĕçмелле. Вăл çавăн пекех ыйхă вĕçнинчен тата стресран пулăшать.

**Хыр папкинчен:** 50 г хыр папкине 1,5 стакан шурă эрехе хушмалла, тĕттĕм вырăнта 2 эрне лартмалла, сăрăхтармалла. Апат хыççăн 1 сехет каярах кунне виçĕ хутчен 1 чей кашăкĕ ĕçмелле. Шĕвек ўслĕкрен тата ўт-пў тăртаннинчен те сиплет.



*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## ПАХЧАÇĂ

*Август уйăхĕнче те çанталăк ăшă, кун кĕскелсен те çутă çителĕклех. Апла суханран, ыхраран ытти ўсен-тăранран пушаннă йăрансене тепĕр хут та лартма юрать. Çак тапхăрта ешĕл çимĕç, хăшпĕр пахчаçимĕç ўстерме пулать. Иртерех пулса çитекен тымарçимĕçе суйласа илмелле. Сентябрь, октябрь пуçламăшĕнче вĕсене пуçтарса кĕртме май пур. Август пуçламăшĕнче вĕтĕ çарăк, çарăк, кишĕр акса хăвармалла. Вĕсене лайăх шăвармалла. Кая юлса лартнă пахчаçимĕç лайăх упранать, сĕтеклĕ те тутлă çитĕнет. Сивĕсем пуçланиччен симĕс пăрçа та çитĕнсе ĕлкĕрет. Салат, шпинат, кăшкарути акма юрать.*

## Тĕрĕс упрамалла

**? Шултра сухан пуçтарса илес тесе çуркунне çулсерен севок лартатпăр. Анчах ўснĕçемĕн вăл кĕпçеллĕ пулать. Капла ан пултăр, сухан шултра çитĕнтĕр тесен вăрлăха мĕнле хĕл каçармалла?**

**Тата сирĕн хаçатра купăстана хурт-кăпшанкăран хўтĕлеме апат содипе усă курсан аван тесе çырнăччĕ. Содăна типĕлле е шывра ирĕлтерсе сапмалла?**

**Зоя ИВАНОВА. Елчĕк районĕ.**

Тĕрĕс мар упранă сухан кĕпçеллĕ пулать. Вăрлăха ăшăра, нўрĕк сахал вырăнта тытмалла. Ку тĕлĕшпе пўлĕмри, пўртри температура меллĕ. Енчен те эсир вăрлăха лартас умĕн кăна туяннă, ăна мĕнле упранине пĕлместĕр пулсан çапла тăвăр: 10-14 кун хушши сухана ăшă батарея çумĕнче типĕтĕр, ун хыççăн пўлĕмре картун курупкара сывлăш кĕмелле упрăр. Хăшпĕр пахчаçă сухана лартас умĕн 40-45 градуслă вĕри шывра темиçе сехет тытма сĕнет. Çакăн хыççăн ăна лайăх типĕтмелле.

Сухан тăраллă ан пултăр тесен çакна асра тытăр:

1) ăна ăшăнса çитмен çĕр çине ан лартăр;

2) хăвăр лайăх пĕлекен, тунана кайман сортсене кăна суйласа илĕр;

3) сухан калăпăшĕ те пĕлтерĕшлĕ – уйрăмах шултри кĕпçеллĕ пулать, çавăнпа лартма вăтаммисене суйламалла;

4) лартиччен сухана марганцовкăн вăйсăр шĕвекĕнче шўтерĕр. Капла вăл лайăх тымарланса хăвăрт шăтса тухать, виçине ўстерет;

5) сухана шăварсах тăрăр, анчах ăшă шывпа кăна, мĕншĕн тесен пĕрре сиввипе, тепре ăшшипе шăварсан тăраллă пулать;

6) кĕпçе курăнсанах ăна татăр, вăл тутлăхлă япаласене туртса ан илтĕр. Татнă хыççăн сухан малалла ўсет, анчах вăл упрама юрăхсăр пулĕ. Унпа апат хатĕрленĕ чухне усă курмалла.

*Купăста хурчĕсенчен хўтĕленсе чылай пахчаçă, чăн та, çулçисене апат содипе сапать (типĕлле).*

## Тухăç илейместĕп

**? Иккĕмĕш çул ĕнтĕ йăран çинче çĕр çырли татаймастăп. Минераллă удобренипе апатлантарни те, шăварса тăни те пулăшмарĕ. Чечекне çурать-ха, анчах вăл вĕтĕ, çимĕçĕ йĕркеллĕ тĕвĕленеймест. Мĕнпе çыхăннă-ши çакă?**

**Е. ЕГОРОВА. Канаш районĕ.**

Ўсен-тăран фитоплазмăпа чирлет. Вăл чĕрĕ организмпа çыхăннă. Чир чечек çеçки (лепесток) симĕсленсен, çу пуçламăшĕнче палăрать. Чечекпе çулçи уйрăмах сиенленеççĕ. Çырла тĕмми, çулçи вĕтелет, йĕркеллĕ çитĕнеймест. Çулçине сутă симĕс тĕс çапать, час-часах пĕрĕнет. Çимĕçĕ те пиçсе çитмесĕрех типет. Чир хурт-кăпшанкă урлă сарăлать.

Чирпе кĕрешме йывăр. Сиенленнĕ ўсен-тăрана йăлтах тĕп тумалла. Лартнă чухне урăх вырăн, сывă хунав суйласа илмелле.

## Еткер кама тивĕçĕ?

**? Ялта пĕччен пурăнакан асанне сасартăк пурнăçран уйрăлчĕ. Анчах пурлăхне никама та халалламан – ăнсăртран вилнипе ĕлкĕреймерĕ пулас. Çурт-йĕрĕ хула çывăхĕнчи районта вырнаçнă май ăна куç хывакан та туллиех. Пурлăха пайланă чухне мĕне шута илеççĕ?**

**Борис НИКОНОВ. Шупашкар районĕ.**

Енчен еткерçĕ халал çырса хăварман пулсан пурлăха пайланă чухне РФ Граждан кодексĕн 63-мĕш статйине тĕпе хураççĕ. Еткерлĕхе тивĕçекенсен хăйсен черечĕ пур.

Пĕрремĕш черетре – ачисем, мăшăрĕ, еткер хăваракан ашшĕ-амăшĕ.

Енчен пĕрремĕш черетпе еткер илме тивĕçлисем пулмасан аппăшĕне йăмăкне, пичĕшĕпе шăллĕне, асламăшĕпе аслашшĕне (тулли тата çурма тăванĕсем) иккĕмĕш черетпе тивĕ.

Виççĕмĕш черетри еткерçĕсем – тетĕшĕпе инкĕшĕ.

Тăваттăмĕшĕнчисем – мăнасламăшĕпе мăнаслашшĕ.

Пиллĕкмĕшĕнчисем – иккĕмĕш сыпăкри мăнукĕ, асламăшĕ-аслашшĕ.

Улттăмĕш черетре вара – иккĕмĕш сыпăкри мăнукĕн ачисем, иккĕмĕш сыпăкри тăванĕн ывăлĕ-хĕрĕ, тетĕшĕпе инкĕшĕ.

Енчен çўлерех асăннă йĕркепе еткерлĕхе тивĕçекенсем пулмасан саккунпа килĕшўллĕн пурлăха тăван мар ывăл-хĕрĕ, амăçури ашшĕ-амăшĕ пайлаççĕ.

Пĕр черетре тăракансем пурлăха пĕр пек пайласа илеççĕ.

## Патшалăх больницинче – тўлевлĕ

**? Больницăра сипленме тиврĕ. Медицина полисĕ пуррине пăхмасăр вĕçĕмех тўлеттерчĕç: эмел, шприц тата ытти те. Мĕншĕн патшалăх больницинче те тўлевлĕ сиплеççĕ?**

**Зинаида ПЕТРОВА. Канаш хули.**

Чи малтан кун пирки район больницин тĕп тухтăрĕнчен е унăн çумĕнчен ыйтса пĕлмелле. Енчен вĕсен ыйтăвĕ тивĕçтермесен медицина полисĕ панă страхлав организацине е ОМС (обязательнăй медицина страхлавĕ) фондне, унăн районти филиалне каймалла.

Эмел, медицина хатĕрĕсем (шприц тата ытти те) туяннă мĕнпур чека упрамалла. Вĕсене больница тўлевсĕр тивĕçтермеллине палăртсан укçана каялла тавăрма пулать.

## Çĕре тавăрса парĕç-ши?

**? Вунă çул каяллах çĕр лаптăкне сутрăм. Кун пирки çĕнĕ хуçана хут çырса патăм. Вăл вара çулталăк иртсен те унăн документсене йĕркелемен. Çитменнине документсăрах сутса янă. Анчах çĕрĕ паянхи кун та ман çинче шутланса тăрать. Ăна каялла тавăрма пулать-ши?**

**Николай МИХАЙЛОВ. Муркаш районĕ.**

Çĕр правине суд урлă тавăрттарма пулать. Хальхи вăхăтра унăн хуçи эсир шутланатăр. Шута илмелле: туянакан сиртен çĕршĕн тўленĕ укçана каялла тавăрттарма пултарĕ. Унăн çакна çирĕплетекен хут пур. Анчах çапла тума вăхăчĕ тахçанах тухнă. Çитменнине çĕр сирĕн харпăрлăхра. Чăн та, кун пек чухне яланах юлашкинчен туянакан тăкак курать. Унăн та хăйне çĕр сутаканран укçана шыраттарса илме май пур.

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Июлĕн, 31 – эрнекун | Августăн, 1 – шăматкун | Августăн, 2 – вырсарникун | Августăн, 3 – тунтикун | Августăн, 4 – ытларикун | Августăн, 5 – юнкун | Августăн, 6 – кĕçнерникун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 3.51 | 3.53 | 3.55 | 3.57 | 3.59 | 4.01 | 4.03 |
| | анать | 20.02 | 20.00 | 19.58 | 19.56 | 19.54 | 19.52 | 19.49 |
| Кун тăршшĕ | | 16.11 | 16.07 | 16.03 | 15.59 | 15.55 | 15.51 | 15.47 |
| УЙĂХ | тăхри | тулли уйăх (13.42) | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 15-мĕш кун | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун | 21-мĕш кун |
| | | Шывтăкан паллинче | Шывтăкан паллинче | Пулă паллинче | Пулă паллинче | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче | Вăкăр паллинче |

## Аслă Çĕнтерӳ: 70 çул

# Вăрçă ахрăмĕ

*(Вĕçĕ . Пуçламăшĕ иртнĕ номерте)*

Тăван тавралăх, Çавал, Хырлапа Шăнкăртам çинчен кăсăккине икĕ чăваш пĕр-пĕрне тата каласа паратчĕçех, вĕсен хăлхине армада кĕрлевĕ хупласа хучĕ.

– Кунталла танксен кĕтĕвĕ килет! Парăнмастпăр! – тапранчĕ вырăнĕнчен Петр Васильев. Вăл алă пулемечĕпе ăста перет. Тихонов вут-хĕм сирпĕтмелли бутылкăсене (бутылки с зажигательной смесью) хăй патнерех куçарчĕ. Винтовкăпа карабин, гранатăсем... Дегтяревăн хăй тĕллĕн авăрланакан винтовки. Вун-вуникĕ патронпа перет. Чăркăшскер тусан пĕрчи саклансанах пеме пăрахать.

Чăваш вăрçăра та чăвашах çав: çиччĕ виçсе пĕрре касма кăмăллать. Çакă ăнланмалла ĕнтĕ – чăваш чунне çиччĕ хисеп çывăх. Ун шучĕпе тĕнчере пирĕн планетăсăр пуçне тата çичĕ тĕнче пур. Унăн юмахĕсенчи шурă акăшсем çичĕ тинĕс леш енне вĕçсе каяççĕ. Хресчен çичĕ тĕслĕ тырра-пулла çичĕ кĕлет тултарма ĕмĕтленет. Ял хĕрĕ пасарта çиччĕ хĕçси суйлать. Çиччĕ хĕçси çип тиркемест, ĕçчен йĕкĕт маттур хĕр патне евчĕ ямасть, хăй каять. Йĕкĕт пикене вăйăран автан çиччĕ авăтсан, шурăмпуç килнĕ чухне, ăсатса ярать килне. Çиччĕ чăвашсемшĕн сăвапла шут: эрнере çичĕ кун, асамат кĕперĕ çичĕ тĕслĕ, тӳпери ялтăр çăлтăр – çич çăлтăр...

Çичĕ юта ĕнселемелли хĕрӳллĕ куна та Тихонов чăвашăн йăли-йĕркипе çиччĕ шута ыттисенчен мала хурса суйласа илчĕ: октябрĕн 13-мĕшĕнче тăшман танксем хыççăн пырса атака пуçларĕ. Нимĕçсен ултă танкĕ аркатать. Çĕр ытла гитлеровец пирĕн алла лекет. Шел, алла аллăн çапăçма тытăнсан Тихонов та йывăр аманать. Çавăн хыççăн Тихоновпа Васильевăн вăрçăри çулĕсем икĕ еннелле каяççĕ. Çар почти икĕ çыру кăна илсе çитерчĕ Васильев аллине тусĕнчен. Алманчăра та унран виçкĕтеслĕхсем илми пулчĕç. Вăл хыпарсăр çухални çинчен пĕлсен Петр Васильевич блокнотне хуйхăллă йĕркесем çырăнаççĕ:

Улăх варринче ут кăшкар
Çулçи вăр-вăр çаврăнать,
Вăрри шăпăр тăкăнать.
Вăрçăри тус аса килсен
Ăш-чик вăр-вăр çаврăнать,
Куççуль шăпăр тăкăнать.

Шăмă та хуçăлать, чул та ванать. Ырă асаилӳ вара яланлăхах сыхланса юлать.

Мускава епле хӳтĕлесе хăварни çинчен асаилӳсем çук мар. Вĕсенчен пĕрне отставкăри подполковник Ф.Медяков çырнă. Вулатпăр:

